22-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1943
ФЕВРАЛЬ
10
ЮНКУН
32(6269) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем БЕЛГОРОД, ШЕБЕКИНО хулисене йышăнса илнĕ

Февралĕн 9-мĕшĕнче генерал-лейтенант К. С. МОСКАЛЕНКО юлташăн войскисем, вăйлă çапăçнă хыççăн, БЕЛГОРОД хулине пысăк чугунçул узелне, çавăн пекех тата ШЕБЕКИНО хулине йышăнса илнĕ. Белгород хулине чи малтан генерал-майор М. И. МЕНЬШИКОВ юлташăн тата полковник А. С. КОСТИЦЫН юлташăн чаçĕсем çĕмĕрсе кĕнĕ.

Трофейсем тытса илнĕ, тыткăна илнисем пур.

СОВИНФОРМБЮРО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Февралĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем вырăнти наступление туснă. КУРСК хулине тытса илнĕ.

Белгородран çурçĕр-хĕвеланăçнелрехре пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн КОРОЧА хулине тата халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

Çурçĕр Кавказ фронтĕнчи войскăсем Старо-Щербиновская ятлă район центрне чугунçул станцине, Александровка, Ейское Укрепление, Камышеватская ятлă район центрĕсене, Новокорсунская, Дядьковская, Шабельская, Глафировка, Николаевка, Должанка ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата Платнировская, Пластуновская ятлă чугунçул станцийĕсене тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еплелех çапăçса пынă.

* * *

Февралĕн 7-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсем тата грузсем турттарса пыракан 150 автомашинана пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 4 батарейине пусарса ларнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, тăшманăн батальонне çити пехотине салатса янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран районĕнче пирĕн войскăсем, тăшманăн контратакисене сире-сире ярса, малалла тапăнса пынă. Дон çинчи Ростовран хĕвелтухăçнерехре пехотăн малта пыракан подразделенийĕсем пĕр пысăк станцăна çĕмĕрсе кĕнĕ те ăна халь гитлеровецсенчен тасатаççĕ. Тепĕр участокра Н-ски кавалери чаçĕ сасартăк тапăнса тăшман обороннин вăйлă тĕреклетнĕ узелне тытса илнĕ. Трофейсем тытса илнĕ, тыткăна илнĕ.

* * *

Краматорская районĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски моторизованнăй часть 300 гитлеровеца вĕлернĕ тата темиçе пункта йышăнса илнĕ. 7 орудипе, 10 пулемет, радиостанци тата çар пурлăхĕ тиенĕ 32 автомашина тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем бронебойщиксем нимĕçсен 7 танкне пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн пĕр батальон пехотине салатса янă.

* * *

Изюмран хĕвеланăçнерехре оборона пĕр рубежĕнче противник сехет чаçĕсем наступление чарма хăтланнă. Пирĕн çăмăллăн кусакан орудисем тăшманăн тылне кĕрсе тата ăнăн оборонине йĕркерен кăларнă. Гитлеровецсем васкаса каялла чакнă. Пирĕн боецсем 11 орудие, 2 танк, 18 противотанковăй пушка, 34 пулемет боеприпассен 3 складне тата ытти трофейсем тытса илнĕ.

* * *

Курскран çурçĕртерехре пирĕн войскăсем вăйлăн малалла тапăнса пынă. Пĕр кун хушшинче çапăçусенче противникăн 100 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: 2 танк, 5 орудие, 26 автомашина, 12 мотоцикл, боеприпассемпе продовольствин склачĕсене тата тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Нимĕçсем чакнă чух хăйсен аманнă салтакĕсене пăрахса хăвараççĕ кăна мар, вĕсене тата вĕлереççĕ те. Тимирязево ялĕнче гитлеровецсем хăйсен госпитальне сирпĕнтерсе янă, унта нимĕçсен 27 аманнă салтакĕпе офицерĕ пулнă.

* * *

Украинăра кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсем йышăннă чугунçул станцине сасартăк тапăннă. Совет патриочĕсем 3 паровоз тата çар груçĕпе тиенĕ 11 платформăна пĕтерсе тăкнă. Çак отрядри партизансен ушкăнĕ пехотăн хĕçпăшалĕпе персе нимĕçсен самолетне ӳкернĕ. Тепĕр отрядри партизансем нимĕçсен пĕр пысăк ялти гарнизонне пĕтерсе сехет хушши хаяррăн çапăçнă. 100 гитлеровеца тата вĕлернĕ. Боеприпассем складне тата темиçе офицерне тăнă çурта сирпĕнтерсе янă. Çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: 5 пулемет, 61 винтовка, миномет тата темиçе ещĕк мина.

* * *

Аялархара нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Воронеж облаçĕнчи Татарино ялĕнче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç бандичĕсем киличчен Татарино ялĕнчи колхозниксем пуян та культурăллă пурăннă. Гитлеровецсем кунта пурăнакан çынсене тĕрлĕ мĕн çаратрĕç. Пĕр шкула, клуба, ача çуратмалли çурт, медпункта, колхозăн хуралтисене тата колхозниксен нумай çурчĕсене ишĕлтерсе пĕтерчĕç, çунтарса ячĕç. Нимĕçсем ялти чиркĕве те çунтарса ячĕç. Фашистла палачсем ялта пурăнакан Анастасия Сапрыкинăна, тăватă ача амăшне Марфа Шапринăна тата Ксения Сапрыкинăна персе вĕлерчĕç». Акт çине Г. Виницкий капитан, В. Алпасийский майор тата ялта пурăнакансем: Е. Сапрыкина, А. Чернышев, А. Чунин, А. Коренков, И. Гончаренко алă пуснă.

Февралĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Февралĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступленилле çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростов районĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен контратакине сирсе янă та малалла кайса тăшманăн вăйлă тĕреклетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 300 виллинe ытла выртса юлнă. Нимĕçсен 4 танкне тата хăй тĕллĕн çӳрекен икĕ орудине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Краматорская районĕнче пирĕн чаçсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Совет танкисчĕсем нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, тăшманăн пехоти ларса пыракан 20 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Купянскран хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем, наступленилле çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Çав пунктсенчен пĕриншĕн пынă çапăçура пирĕн боецсем нимĕç пехотин батальонне аркатса тăкнă, 8 противотанковăй орудипе, 13 пулемет, 18 автомашина, радиостанци тата çар пурлăхĕсем тиенĕ обоза тытса илнĕ.

* * *

Гостищево ятлă чугунçул станци районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем, нимĕçсем хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла кайнă, вĕсен темиçе опорнăй пунктне тытса илнĕ. Тăшманăн 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен 5 танкне тата 11 орудине персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Курск районĕнче пирĕн войскăсем анăçлăн малалла тапăнса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пĕр танк, 19 оруди, 29 пулемет, 28 автомашина, 3 тягач, горючи складне тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

Фатеж хулинче пирĕн войскăсем нимĕçсен 2 сводная батальонне, полици отрячĕсене тата тылри ытти чаçĕсене çапса çĕмĕрнĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ, вĕсене халь шута илеççĕ.

* * *

Ростов облаçĕнче кĕрешекен партизансен „Гроза" ятлă отрячĕ пĕр пысăк станцăри нимĕç гарнизонне аркатса тăкнă. Станцăна тытса илсе, совет патриочĕсем ăна Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем пырса çитиччен хăйсен аллинче тытса тăнă. Партизансем тир-сăран складне, 105 центнер çăм, 1.700 тонна тĕштырă, 200 лаша, боеприпассем тиенĕ 4 автомашина, юсавлă 25 тракторпа тягач тытса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 7-мĕш авиаполевой дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтаксем Ганс Фронер, Генрих Вольф тата Рудольф Киссел çапла каласа панă: „7-мĕш авиаполевой дивизие пĕлтĕр кĕркунне пухса тунă. Вăл дивизие аэродром службинче тăракан салтаксене пуçтарнă. Декабрь уйăхĕнче çав дивизие Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта янă. Салтаксене çав дивизи резервра пулать тесе каланă. Анчах эпир часах çакна ăнланса илтĕмĕр: командовани сывлăш-çар вăйĕсенчи салтаксене, ятарласа вĕрентнĕскерсене, фронта пехота шучĕпе ярать пулсан—нимĕç войскисен ĕçĕсем начар пулаççĕ вара. Пирĕн дивизи малтанхи çапăçусенчех хăйĕн йышĕн 60 процентне çухатрĕ, вăл халь çапăçма пултараймасть ĕнтĕ. Чĕрĕ юлнă салтаксем нумай куçса çӳренĕ пирки ывăнса çитнĕ. Пире умлăн-хыçлăн приказсем парса тăчĕç: „Тытăнса тăрăр", терĕç. Анчах та вырăссем пире хĕвеланăçнелле хăваланăçемĕн хăваласа пычĕç. Салтаксен пурин те халь пĕр шухăш çеç: часрах тата аяккарах чакса вырăссенчен татăлса каясчĕ те темиçе кун та пулин канасчĕ, теççĕ вĕсем".

* * *

Аяларахра Орел облаçĕнчи Ушаково ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: „Гитлерла бандитсем Ушаково ялĕнче юнлă ĕçсем тунă. Вĕсем Максим Горький ячĕпе тăракан колхозăн председательне С. Ушакова, учителе Д. Карлова тĕрмене хупнă та унта вĕсене икĕ эрне хушши выçă усранă, унтан вара тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Çĕнĕ çул кунĕ ыран генĕ чух нимĕç влаçĕсем пур çынсене те хăйсен çурчĕсенчен хăваласа кăларнă та шартлама сивĕре хире илсе кайнă. Хресченсене хăйсемпе пĕрле нимĕнле продукт та нимĕнле япала та илсе пыма паман. Хăйсен ачисене выçă вĕлерес мар тесе, 47 хĕрарăм яла çăкăр илме таврăннă. Фашистла пуçкасакансем çав хĕрарăмсене пурне те вĕлернĕ, вĕсен виллисене вара бензин сапса çунтарса янă". Акт çине Л. Ушаков, А. Ушакова, А. Ушаков, Н. Ушакова, П. Ушакова алă пуснă.

Çуракине лайăх хатĕрленсе çитессишĕн

ЕТĔРНЕ, февралĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем кăçал çуркунне акмалли вăрлăхсене пур культурăсем енĕпе те çителĕклĕ таран уйăрса хучĕç. Паянхи куна районри кашни колхозăнах çуркунне акма вăрлăх çителĕклĕ. Вăрлăхсен пахалăхĕ кăçал иртнĕ çулхинчен чылай пысăк. Уйăрмах сеялка тата ытти тĕштырăсен вăрлăхĕсем лайăх. Акма уйăрнă вăрлăхсен 77 процентне паянхи куна триерсемпе сортланă. Ку ĕçе халь нумай колхозсем пысăк хăвăртлăхсемпе туса пыраççĕ.

35 колхоз хăйсен транспорт инвентарĕсемпе ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтерчĕç. Районĕпе илсен çуракинче ĕçлемелли плугсен 45 процентне сеялкăсен 74 процентне сӳрсен 84 процентне юсаса лартнă. Плугсене юсас ĕçе хăвăрт туса пыма районри колхозсенче плугсен тимĕрĕсем çитменни тата вĕсене тума тимĕр çитменни чарса тăрать. Анчах ку ĕçе те çак кунсенчех майласа яраççĕ.

Январь уйăхĕнче районри колхозсем уйсене 22.779 тонна тислĕк кăларнă. Вырăнти удобренисене пухса хатĕрлес ĕç колхозсенче халĕ те пысăк çĕкленӳпе пулса пырать. Колхозсем çуракине хатĕрленес ĕçе Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун тĕлне вĕçлес лозунгпа туса пыраççĕ.

И. Лепешкин.
Район ĕç ушкăнĕн главнăй агрономĕ.

Боевой самолетсен „Комсомолец Чувашии" ятлă эскадрильине тума 9.336.000 тенкĕ пухнă

Сталин юлташăн саламĕпе тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунипе хавхаланса, республикăри комсомолецсемпе çамрăксем боевой самолетсем тума малтан 6 миллион тенкĕ пухнипе пусне, халĕ татах 3 миллион та 336 пин тенкĕ пухса банка хывнă. Çапла вара самолетсен эскадрильине тума пĕтĕмпе 9 миллион та 336 пин тенкĕ пухăннă.

Çак ĕçе пусăрнă Чкаловски районри комсомолецсемпе çамрăксем (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Чередникова юлташ) 1.142.000 тенкĕ пухнă. Шăмаршă районĕ (Старостина юлташ)—600 пин тенкĕ, Вăрмар районĕ (Залевский юлташ)—450 пин тенкĕ, Элĕк районĕ (Соловьев юлташ)—402 пин тенкĕ, тата Шупашкар хули (ВЛКСМ горкомĕн секретарĕ Охандерова юлташ)—700 пин тенкĕ пухнă. Асăннă районсем укçа пухас тĕлĕшпе малта пыраççĕ.

Анчах Кувакино (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Ушкова), Тăвай (Яковлева юлташ) тата Сĕнтĕрвăрри районĕсен комсомолецĕсем çамрăксем укçа пухас ĕçре халĕ те юлса пыраççĕ-ха. Кувакино районĕ самолетсем тума мĕнпурĕ те 69 пин тенкĕ çеç пухнă.

Комсомолецсемпе çамрăксем Сталин юлташăн саламлă телеграммине аннăн ăнлантарса парса, самолетсен „Комсомолец Чувашии" эскадрильине тума укçа пухас ĕçе хăвăртлатар!

П. Михайлов,
ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн секретарĕ.

Танксен „Советский физкультурник" колоннисемпе самолетсен эскадрильисене тунă çĕре хутшăнăр!

Сталин юлташăн доклачĕпе приказĕ, пирĕн воинсен çапăçури анăçăвĕсем совет тылĕнчи боецсене фронта пулăшассине вăйлатма, пархатарлă ĕçсем тума хавхалантараççĕ. Пирĕн халăх, унпа пĕрле физкультурниксем те, гитлерла вăрă-хурахсене тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе тăкассишĕн ниме те шеллесе тămaççĕ.

Совет физкультурникĕсем халĕ профсоюзсемпе комсомолецсен çулсерен пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кросне хатĕрленеççĕ. Физкультурниксем умĕнче халĕ Хĕрлĕ Çар ретне тăма хатĕр тăракан йĕлтĕрçĕ-боецсен çĕнĕ отрячĕсене хатĕрлес задача тăрать.

Пенза облаçĕнчи физкультурăпа спорт Комитечĕн председателĕн Георгий Кулаков юлташăн пархатарлă пуçарăвне йышăнса илсе эпир „Динамо" Чăваш совечĕн 2-мĕш номерлĕ спорт коллективĕн чи физкультурниксем, Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, танксен „Советский физкультурник" колоннисемпе боевой самолетсем тума пĕр кун хушшинчех 53.000 тенкĕ укçа тата государство заемĕсем пухрăмăр, вĕсене банка хыватпăр.

Укçа пухас ĕçе малалла та туса пыратпăр.

Эпир Чăваш республикинчи мĕнпур физкультурниксемпе физкультурницăсене пирĕн примера йышăнса илме чĕнетпĕр.

„Динамо" Чăвашсовечĕн 2-мĕш номерлĕ спорт коллективĕ хушнипе: Леонтьев, Московкин, Созончик.

МУМИКОВ 750 ТЕНКĔ ПАЧĔ

ÇĔМĔРЛЕ. („Чăваш Коммуни" корр.) Танксен колоннипе боевой самолетсем тăвас ĕçе пионерсемпе шкул ачисем те активлăн хутшăнма тăрăшаççĕ. Хальхи вăхăтра укçа пухас ĕç пур шкулсенче те анлăн сарăлса пырать.

Чăваш Улхашри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем юлашки вăхăтра кăна 2000 тенкĕ пухрĕç, пĕтĕмпе вĕсем 5.000 тенкĕ пачĕç. 6-мĕш класра вĕренекен Октябрин Мумиков самолетсен эскадрильине тума 750 тенкĕ пачĕ. Вĕренекенсем чылайĕшĕ унăн пимерĕпе 100-шер тенкĕ параççĕ. Миша Мизяковпа Володя Иваничев кашниех 150-шар тенкĕ хыврĕç.

Хутарти вăтам шкулта вĕренекенсем те самолетсем тунă çĕре 9 пин тенкĕ ытла пачĕç.

Шупашкар ĕççыннийĕсем фронтовиксене 500 посылка ярса пачĕç

Февралĕн 8-мĕшĕ тĕлне Шупашкар хулинчи ĕççыннисем фронтовиксене 500 посылка ярса пачĕç. Çĕршыва геройла хӳтĕлекенсене валли ЧАССР Шалти ĕçсен Халăх Комиссариатĕнче ĕçлекенсем 18 посылка хатĕрленĕ. Кашни посылка ăшне çур литр эрех, пĕр пачка пирус, 2 пачка табак, çур кило сахăр, пĕр килограмм колбаса, 5 коробка спичка, одеколон, сăмса тутри гимнастерка воротникĕсем, çырмалли хут т. ыт. те хунă. Пĕр посылкине ятарласах шефа илнĕ часть командирĕ Гвардин генерал-майорĕ Ерохин юлташ валли хатĕрленĕ.

Посылкăсем янă çĕрте хĕрарăмсен советĕнче тăракан активисткăсем Злотина, Митерова т. ыт. юлташсем уйрăмах активлăн хутшăннă.

Коллектив кунсăр пуçне госпитальри боецсемпе командирсем валли те пуян парнесем хатĕрлет.

Хулари „14 лет Октября" тата „Красная Волга" ялхуçалăх артелĕсен членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем патне 20-шер посылка янă. Эрех завочĕн коллективĕ 6 посылка янă.

А. Чиркова.

Çамрăк выльăхсене лайăхрах пăхмалла

Советски районри колхозсенче çамрăк выльăхсене пăхас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла. Кăçал колхозсенчи обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышне çĕнĕрен тихасем—625 пуç, пăрусем—957 пуç, сысна çурисем—7.040 пуç, путексем—3.553 пуç хутшăнмалла. Пур çамрăк выльăхсене те тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ӳстересси колхозсем умне государство лартнă задача пулса тăрать.

Çак задачăна районри колхозсем мĕнле пурнăçласа пыраççĕ-ха? Тӳрех калас пулать, хăшпĕр колхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа хăварас тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ. Паянхи куна сысна çурисем—381 пуç, пăрусем—161 пуç, путексем—1.187 пуç хутшăннă. Çак шутран 3 пăру, 27 сысна çури, 20 путек япăх пăхнипе вилнĕ. Апла пулсан та çамрăк выльăхсене пăхас ĕçе лайăхлатма тăрăшни сисĕнмест.

«Волна революции» колхоз акă выльăх витисене ăшăтман, ĕнесем сивĕ витесенчех пăрулаççĕ, çавăн пекех сыснасен витисем те сивĕ. Ферма работникĕсем пăруламалли ĕнесене сăнаса тăмаççĕ. Ама сыснасене çăварлас умĕн те уйрăмăн пăхмаççĕ. Çавна пула колхозра пĕр пăру тата 4 сысна çури çуралнă хыççăнах шăнса вилнĕ. «Ударник» колхозра та сивĕпе 7 пуç сысна çури шăнса вилнĕ. Фермăра ĕçлекенсен ĕç дисциплини япăх. Ферма заведующийĕ Державин ответлăха туйса ĕçлемест.

Çамрăк выльăхсене кĕтсе илес тата вĕсене пăхса ӳстерес ĕçе колхозсенче халех йĕркелес пулать. Ферма работникĕсен ĕçри ответлăхне ӳстерес пулать. 14 колхозра халь хутшăнакан пăрусене усрама ăшă пӳлĕмсем хатĕр мар. Çамрăк сысна çурисене усрама районри нихăш колхозра та уйрăм ăшă витесем çук. Халĕ çеç çуралнă сысна çурисем, путексем амăшĕсемпе пĕрлех сивĕ витесенче пурăнаççĕ. Çакăнтан килсе тухать те ĕнтĕ çамрăк выльăхсем вилесси.

Ĕçе халех тӳрлетме районри колхозсен майсем пур. Кашни колхозрах çамрăк пăрусене вăхăтлăха усрама ăшă пӳлĕм тупма пулать. Çăварланă сыснасене çурисемпе пĕрле пĕр вăхăт ăшă витесенче уйрăмăн пăхма май пур, ĕнесене те пушанма уйрăм ăшă витесем тупса пама пулать. Анчах чылайĕш колхозсен руководителĕсем çамрăк выльăхсене пăхса усрас ĕçпе хăйсем интересленмеççĕ. Çак ответлă ĕçе вĕсем йăлтах фермăсен заведующийĕсем çине хунă.

А. Федорова.

Хĕрлĕ Çар фондне—тырă

Тури Тимĕрçкассинчи (Комсомольски район) «Çĕнтерӳ» колхоз членĕсем хăйсен ытлашши тыррине Хĕрлĕ Çар фондне хываççĕ. П. Коптуганов—15 пăт, М. Герасимов—10 пăт тата ытти колхозниксемпе колхозницăсем 4—5-шер пăт пачĕç.

(«Октябрь ялавĕ»).

Совет Союзĕпе Колумбия пĕр-пĕрин патне посланниксем ярасси çинчен

Колумби правительстви икĕ çĕршыв пĕр-пĕрин патне посланниксем ярасси çинчен панă сĕнĕве Совет правительстви йышăннă. Çав ыйтупа икĕ правительстви те пĕр-пĕринпе калаçса татăлнине Колумбин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ г-н Г. Турбай тата ССР Союзĕн США-ри посолĕ М. М. Литвинов юлташ пĕр-пĕрин патне нотăсем янипе çирĕплетнĕ.

Февралĕн 3-мĕшĕнче г-н Г. Турбай М. М. Литвинов юлташ патне çакăн пек нота янă:

«Колумби республикин президенчĕ мана Сирĕн Превосходительствăна çакăн çинчен пĕлтерме полномочи панă: пирĕн икĕ çĕршыв хушшинче 1935 çулта тунă йĕркеллĕ дипломатиллĕ çыхăнусене малалла аталантарса пырас шутпа, Колумби правительстви Советлă Социализмлă Республикăн Союзĕпе пĕр-пĕрин патне посланниксем яма кăмăл тăвать.

Эпĕ пĕтĕм чĕререн çакна шанса тăратăп: çакăн пек представительсем яни Колумбипе ССР Союзĕ хушшинчи туслăха тата пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлессине çирĕплетес ĕçре вăхăтра çĕнĕ утăм туни пулать».

Кăçалхи февралĕн 4-мĕшĕнче М. М. Литвинов юлташ Г. Турбай господина çакăн пек нотăпа ответленĕ:

„Çак нотăпа эсир февралĕн 3-мĕшĕнче янă нотăна илнине çирĕплететĕп. Çав нотăра Колумби правительствин ячĕпе Эсир ССР Союзĕпе Колумбия пĕр-пĕрин патне полномочнăй посланниксем ямалла тума сĕнетĕр. Питех те кăмăлласа, Сире çакăн çинчен пĕлтеретĕп: çӳлте кăтартса панă шухăш Совет правительствин кăмăлĕпе килĕшет, унăн ячĕпе эпĕ Сирĕн сĕнĕве йышăнма тивĕçлĕ тетĕп".

—o—

Ют çĕршывсенче

ЧЕРЧИЛЛЬ ТРИПОЛИРЕ ТУХСА КАЛАНА САМАХ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: хăй Триполире пулнă чухне Черчилль 8-мĕш армин салтакĕсем умĕнче сăмах тухса каланă «Эсир, — тенĕ Черчилль, — вăрçăн характерне тĕлĕнмелле улăштартăр. Пушхирти çар Триполине эпир импери генеральнăй штабĕн начальникĕпе пĕрле Касабланкăра Рузвельт президентпа канашланнă вăхăтра пырса кĕни пирĕн калаçусене влияни паракан тата малашнехи шанчăксене уçса паракан çĕнĕ фактор пулса тăчĕ».

«Эсир малалла куçса пынине шута илсе тунă тепĕр анлă наступлени,—тенĕ малалла Черчилль хăйĕн сăмахĕнче, — пирĕн англичансен 1-мĕш армине, хамăрăн юлташсене—американецсене тата французсен çарне Бизертăпа Тунис патне 30—40 мильăпа яхăн çывăха пыма май пачĕ. Çапла вара, вăрçă ĕçĕсенче кашниех çăмăллăнах ăнланса илме пултаракан лару-тăру пулса тăчĕ. Сирĕн çĕнтерӳсен кунĕсем вĕçленмен-ха, тĕрлĕ çĕртен килекен вăйсем пулăшнипе, эпир хĕçпăшаллă нимĕçсемпе итальянецсене пĕр çын юлмиччен пурне те пĕтерсе тăкма е Африка çыранĕсенчен хăваласа яма пултаратпăр».

СОЮЗНИКСЕН ÇУРÇĔР АФРИКАРИ ФРОНТНЕ ХАЙНЕ УЙРАМ ФРОНТ ТУНА

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕн çак пĕлтерĕвне парать: унта Çурçĕр Африкăри фронта тăвасси çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ. Çав фронта генерал-лейтенант Эйзенхауэр ертсе пырать. Эйзенхауэр союзниксен Тунисри мĕнпур операцийĕсене ертсе пырать, англичансен пĕрремĕш армийĕ те ăна пăхăнса тăрать. Анчах та çав решени вăл Александер генералăн функцийĕсене пырса тивмест.

ÇУРÇĔР АФРИКĂРА ÇАР КОМИТЕЧĔ ТУНА

ЛОНДОН, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Жиро генерал Франци владенийĕсен Советне хупнă, ун вырăнне Çар Комитечĕ тунă.

Хулари парторганизацин малашнехи çитěнěвěсемшěн

Отечественнăй аслă вăрçă Шупашкар хулинчи парторганизаци умне, пěтěм большевикла парти умне лартнă пекех, пысăк та ответлă задачăсем лартрě.

«Вăрçа чăннипех туса пыма организованнăй çирěп тыл кирлě, — тесе вěрентнě Ленин. — Чи лайăх çар та, революцие тарăнăн парăнса ěçлекен çынсем те, вěсем хěçпăшалланман пулсан, вěсене продовольстви паман пулсан, вěрентмен пулсан, противник вěсене çийěнчех пěтерсе тăкать».

«Совет çыннисем хăйсене мобилизацилени тата пěтěм ěçе çěнěлле, вăрçă ыйтнă пек йěркелесе яни кирлě», тесе кăтартса парать Сталин юлташ.

Ленинпа Сталин кăтартса панисене пурнăçа кěртсе, Чăваш республикин столицинчи большевиксем, фронта мěн кирлине пурне те парас, тыла тěреклетес, хулари ěççыннисен вăй-халěпе ирěкне тата средствисене паттăр Хěрлě Çара пулăшма, тăшмана çěмěрсе тăкма мобилизацилес тесе, хěрӳллěн ěçлерěç тата халě те хěрӳллěн ěçлеççě. Хулари промышленность предприятийěсемпе организацисене вăрçă ыйтнă пек ěçлеттермелле пулнă, вěсен ěçне фронт ыйтнă пек йěркелесе ямалла пулнă; хулана куçарса килнě фабрикăсемпе заводсене хăвăртрах ěçе яма пур условисене те тумалла пулнă; оборона продукцийěсене пěр чарăнусăр туса кăларас ěçе организацилемелле пулнă.

Çак задачăсене татса парас ěçе хулари парторганизацин пěтěм вăйне мобилизациленě.

Вăрçă вăхăтěнче Шупашкарти промышленность тěпренех улшăнса çěнелчě. 1942 çулта, 1941 çултипе танлаштарсан, 5 хута яхăн продукци ытларах туса кăларнă. Рабочисен хисепě юлашки çулталăк çурă хушшинче 4 хута яхăн ӳсрě. Стахановецсен хисепě 1942 çулта 1.775 çын чухлě ӳсрě. Иртнě çулти апрельтен пуçласа, продукци туса кăлармалли плана хула пěтěмěшпе кашни уйăхрах тултарса пычě. Çулталăкри плана вара 102,2 процент тултарнă.

Сталин юлташăн майăн 1-мěшěнчи приказě çине ответлесе пуçланса кайнă Пěтěм Союзри социализмлă ăмăрту чылай йывăрлăхсене çěнтерме пулăшрě. Хулари чылай предприятисем çак ăмăртура малти вырăна тухрěç. Социализмлă ăмăртăва пиншер рабочисене, инженерлатехникла работниксемпе служащисене явăçтарнă.

Пěтěм хула государство планне тултарса пынă вăхăтрах, хăйсен производствăллă заданийěсене тултарайман предприятисем те пурха. Хăшпěр парторганизацисемпе хуçалăх руководителěсем тунă çитěнӳсене çирěплетсе хăварма пěлмеççě. Савăн пек пулчě эрех заводěнче. Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăвăн август уйăхěнчи итогěсене тунă чухне унăн лайăх ěçне палăртнăччě. Завод сентябрь уйăхěнче те хăвăртлăхсене чакармарě. Анчах та, хуçалăх руководителěсем малашнехи ěçре чěртавар тиесе килес ěçри йывăрлăхсене çěнтерме пěлмерěç, парторганизаци вара çак ěçе вăхăтра тěрěслесе пымарě, çавăнпа вара завод кая юлнисен шутне лекрě. Октябрьте те, ноябрьте те, декабрьте те завод плана тултараймарě.

Пирěн малта пыракан пысăк предприятисенче те чылай çитменлěхсем тěл пулаççě-ха. Продукци туса кăларассине ӳстермелли, продукцин пахалăхне лайăхлатмалли тата унăн хăйне ларакан хакне йӳнетмелли резервсемпе заводсен пěтěмěшпех усă курмалла, вěсене пěтěмпех мобилизацилемелле. Çирěп график тăрăх ěçлемелле тăвас пулать, çухатусене май пур таранах чакарас пулать, перекетлěх режимне çине тăрса пурнăçа кěртсе пырас пулать, оборудованисемпе пěтěмпех усă курса, заводсене анлăлатса пырас пулать. Пир-авăр фабрикипе чăлха фабрикинче чылай оборудованисене халě те ěçе яман-ха.

Хулари вырăнти промышленность хăйěн задачисене çителěксěр пурнăçа кěртсе пырать, вăл 1942 çулти плана 90 процент кăна тултарчě. Вырăнти промышленноçăн чылай предприятийěсен руководителěсем вăрçă кăларса тăратнă йывăрлăхсене çěнтерме пултараймарěç. ВКП(б) Горкомě кăтартса панă пулин те, вěсем Хěрлě Çара каякан рабочисем вырăнне çěнě рабочисем хатěрлес тěлěшпе вăхăтра мерăсем йышăнмарěç, çавăн пекех рабочисене пурнăçпа йăла тěлěшěнчен условисем туса парас тěлěшпе те тивěçлипе тăрăшмарěç. Çаксен шутне «Вышивка», «Металлист», «Красный кустарь» артельсем кěреççě. Хăшпěр артельсенче пěрлешсе апатланас ěçе йěркелесе яман, ěç дисциплини начар.

Вырăнти промышленность çителěксěр ěçлени çак ыйту çине хула совечě, çавăн пекех тата ВКП(б) хула комитечě те çителěксěр çавăрнса пăхни çиччен калать. Горсовет исполкомě вырăнти промышленность ěçěпе çыхăнса тăракан ыйтусене тӳсме çук вăраххăн татса парать. Çапла, горсовет спичка фабрики валли çурт тупайман пирки, çав фабрикăна иртнě çулта ěçе ярайманăмăр. Горсовет вырăнти промышленность предприятийěсем валли ěç вăйě тупас тěлěшпе те начар ěçлет. Горкомăн промышленность отделě предприятисемпе артельсен экономикине тěплěн пěлме тăрăшман, çавăнпа та вěсене вăхăтра практикăллă пулăшу парайман, йышăннă решенисене пурнăçланине начар контрольлесе пынă. Горсоветпа парти горкомěн вырăнти промышленность предприятийěсен ěçне конкретлăнрах тата лайăхрах ертсе пырас пулать.

Фабрикăсемпе заводсен хисепě хăвăрт ӳснине пула, хула электроэнерги нумай ытларах ыйтма пуçларě. Çав вăхăтрах, электростанцире халě большевикла йěркелěх туманха. Машинăсене кирлě пек пăхса усрамаççě, машинăсен отделенинче таса мар, производствăллă дисциплина начар, ремонт ěçне тивěçлипе йěркелесе яман, машинăсене техника хушнă пек эксплоатацилени çук, ěçре культурăлăх çитмест. Топливăпа сěрмелли çусене перекетлессишěн чăннипе кěрешни çук. Дирекци, партипе профсоюз организацийěсем çитменлěхсене хирěç татăклăн кěрешме хăйсен коллективне çěклеймен.

Иртнě çулта электростанцин мощноçне ӳстерме укçа-тенкěпе оборудованисем уйăрса панă пулнă, анчах та палăртнă плана пурнăçа кěртеймен, мěншěн тесен, оборудовани комплектлă пулман. Водосветăн руководстви вара çитмен пайсене тупас тěлěшпе татăклă мерăсем йышăнман. Тума палăртнă ытти ěçсем те электростанцире пурнăçа кěмесěрех юлнă. Электростанцине хěле хатěрлес ěçе пачах çителěксěр туса ирттернě. Водосветăн директорě Лысенко юлташ çитменлěхсене пěтерес тата предприятире большевикла йěркелěх тăвас тěлěшпе татăклă мерăсем йышăнман.

Электростанцире партиллě-политикăллă ěçе те çителěксěр туса пынă. Чăнах та, парторганизацин нумаях та пулмасть суйланă секретарě коллективра политикăллă воспитани ěçне организацилес, социализмлă ăмăртăва сарса ярас тата комсомол организацине тěреклетес тěлěшпе ěçлеме тытăнчě. Анчах ку пуçламěшě кăна-ха.

Электростанци çакăн пек начар ěçленишěн партин хула комитечě те хăшпěр таран айăплă. Парти горкомěн бюровě электростанцире йěркелěх тăвас тěлěшпе, дизельсене вăхăтра юсас, кирлě детальсене хатěрлеме вăхăтра заказ парас тěлěшпе татăклă мерăсем йышăнман тата хулари пысăк предприятисен директорěсене электростанцие пулăшма çине тăрса хушман.

Хулари промышленность предприятийěсене тата ытти организацисене электроэнерги парса тăрасси чи кирлě ыйту пулса тăрать. Кунта, электростанцире хăйěнче большевикла йěркелěх тунипе пěрлех, машинăсене техника енчен тěрěс усă курассине организациленипе, çěнě мощноçне хăвăртрах ěçе янипе пěрлех, хулари парторганизацисен предприятисенче тата учреждениссенче электроэнергипе перекетлěн усă курас тěлěшпе чăн-пăн кěрешӳ пуçласа ямалла.

Пирěн электростанцин тěрěс-тěкěл тата пěр чарăнусăр ěçлеме пур условисем те пур. ВКП(б) горкомěн, Водосветри парторганизацин, унти пěтěм коллектива мобилизацилесе, электростанцин ěçне çывăх кунсенче татăклăнах лайăхлатмалла. Çакăнпа пěрлех çěнě строительствăна та хăвăртлатса пымалла. Парти горкомěн çак ěçе уйрăмăн контрольлесе пымалла тата кулленех практикăллă пулăшу памалла.

Отечественнăй вăрçă тапхăрěнче пирěн чугунçул станцин вырăнě питех те ӳсрě. Анчах та, унăн ěçě пěтěмěшпе илсен лайăхланнă пулин те, станци юлашки вăхăтченех хăйěн задачисене çителěксěр пурнăçа кěртсе пырать-ха. Станцири тěп çитменлěх вăл — вагонсем ытлашши нумай простой туни пулать. Предприятисемпе учрежденисен руководителěсем вагонсене çěрле пушатас тата тиес ěçе организацилемен, грузсене яма хатěрлес ěç çине час-часах ответсăррăн пăхаççě. Станци руководителěсем тата унти парторганизаци çименлěхсене пěтерес, станци ěçне вăрçă вăхăчě ыйтнă пек йěркелес тěлěшпе начар кěрешеççě.

Вăрçă условисенче перекетлěх ыйтăвě уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ыйтăва хулари партипе комсомол активěсен пухăвěсенче, партипе комсомолăн пуçламěш организацийěсенче, промышленность предприятийěсенчи партипе хуçалăх активěсенче сӳтсе-явнă. Хăшпěр ӳсěмсем тунă. Çапах та, хуçасăрлăхăн тата тирпейсěрлěхěн факчěсем пирěн нумай-ха, оборудованисемпе начар усă курни, чěртаварпа материалсене çителěксěр шута илсе пыни тěл пулать-ха.

И. ЧАРЫКОВ

ВКП(б) Обкомěн тата хула комитечěн секретарě

Перекетлěх ыйтăвě плана тултарас тата шалти резервсемпе пěтěмпех усă курас ěçре чи кирлě вырăн йышăнса тăнине шута илсе, партин пуçламěш организацийěсен тата ВКП(б) горкомěн çак ыйтăва пěрмаях тěп ěç тесе шутлас пулать, чěртавара, топливăна, электроэнергие перекетлени, оборудованисемпе тата ěç вăйěпе усă курассине лайăхлатни хулари промышленноçа нумай укçа-тенкě тăкакламасăрах продукци ытларах туса кăларма май панине асра тытас пулать.

Предприятисемпе учрежденисене валли топливо хатěрлес тěлěшпе хулари коммунистсен чылай вăй хурса ěçлемелле пулчě. Парти организацийěсем вутă хатěрлес ěçе пиншер рабочисене, служащисене тата килхуçи хěрарăмěсене явăçтарма пултарчěç. Виççěмěш кварталти плана 101,4 процент тултарнă. Анчах та виççěмěш кварталта вутă хатěрлес ěç ăнăçлăн пынине пула горисполком, парти горкомě тата предприятисемпе учрежденисен руководителěсем лăпланса ларчěç, çакна пула тăваттăмěш кварталта вутă хатěрлес план пурнăçа кěреймерě: 123 пин кубометр хатěрлес вырăнне 30 пин кубометр кăна хатěрленě. Вутă турттарса тухас ěç те çителěксěр пулса пырать. Пирěн вăрман хатěрлекен организацисем — леспромхозпа Милютинри лесопункт хулана топливо парас ěçе лайăхрах организилеме тивěçлě. Юлнă вăхăтпа усă курса, вутă хатěрлес тата турттарас ěçе вăйлатмалла, çуркуннехи шыв-шур вăхăчě валли топливăн кирлě запасне туса хумалла.

Кăçал Атăл лешъенчи торф предприятийě умěнче пысăк задачăсем тăраççě. Торф предприятийěн дирекцийěпе парторганизацийěн планпа палăртнă хатěрленӳ ěçěсене пурне те туса ирттерсе, килес сезонра торф кăларас плана пурнăçа кěртме майсем туса хумалла.

Вăрçă вăхăтěнче пирěн хула чылай ӳсрě. Çакă вăл горсоветпа ВКП(б) горкомне ěççыннисен йăла ыйтăвěсене тивěçтерес тěлěшпе хăйсен ěçне татăклăнах лайăхлатма хушать. Предприятисен подсобнăй хуçалăхěсене анлăлатса пырас пулать, куллен кирлě таварсем туса кăларассине ӳстермелле, тумтирсемпе ат-пушмаксем юсакан мастерскойсен ěçне лайăхлатмалла, комунальнăй предприятисен ěçне, уйрăмăнах мунча ěçне лайăхлатмалла, пурăнмалли çурт-йěрсемпе усă курас ěçре йěркелěх тумалла.

Парти организацийěсен Пěтěм Союзри XVIII-мěш партконференци йышăннă историллě решенисене пурнăçа кěртессишěн тăтăшах вăйлăн кěрешсе пымалла, çав решенисем вăрçă условийěсенче уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăраççě.

Хулари парторганизацин кадрсене суйласа илес, вěсене ӳстерсе пырас тата вырнаçтарса тăратас тěлěшпе сахал мар ěçлемелле пулчě. Хулари чи лайăх çынсем, вăл шутрах коммунистсем те, нумайěшě фронта кайрěç. Вěсен вырăнне çěнě, çамрăк кадрсем йышăнчěç. Хулари VII-мěш партконференципе VIII-мěш партконференци хушшинчи тапхăрта ертсе пырас ěçе 962 çынна лартнă, вěсенчен нумайěшě хěрарăмсем. Парти аппаратне илнě çěнě çынсенчен 61 проценчě хěрарăмсем. Совет аппаратěнчи ертсе пыракан работниксенчен 64,7 проценчě хěрарăмсем, çутěç учрежденисенче —88,5 процент, сывлăха сыхлав учрежденисенче — 68,3 процент хěрарăмсем ěçлеççě. Промышленноçри ертсе пырас ěçе хěрарăмсене çителěксěр уйăрса лартнă — кунта вěсем 22,3 процент кăна. Парти горкомěн, унăн кадрсен отделěн тата промышленность предприятийěсенчи парторганизацисен ěçěн çак участокě çине уйрăмăнах вăйлăн çавăрăнса пăхас пулать.

Вăрçă пуçланнăранпа Шупашкарти фабрикăсемпе заводсене рабочисен çěнě йышě, пуринчен ытларах çамрăксемпе хěрарăмсем, хутшăнчěç. Икě пысăк заводра çамрăк кадрсен йышě мěнпур рабочисен хисепěнче 80—90 процент пулать. Рабочи класăн çав çěнě йышне специальноçа вěрентсе хатěрлемелле, унăн производствăри ăсталăхне ӳстермелле, ăна техникăна юратма вěрентмелле. Çавна май ВКП(б) хула комитечěн рабочи класăн çěнě йышěнчен массăллă квалификациллě кадрсем хатěрлес тěлěшпе ответлăхě ӳсрě. Хулари тěп предприятисен руководителěсем, пуçламěш парторганизацисем çав ыйту пысăк вырăн йышăнса тăнине тěрěс ăнланса илчěç тата ăна начар мар татса пачěç. Анчах, хăшпěр предприятисенче, уйрăмах вырăнти тата кооперативлă промышленноçăн предприятийěсенче, кадрсем вěрентсе хатěрлес ыйту çине кирлě пек çавăрăнса пăхман. Çакăншăн ěнтě чи малтан парти горкомěн промышленность отделě тата кадрсен отделě айăплă.

Пирěн предприятисем валли рабочисем хатěрлесси, вěсен производствăри ăсталăхне ӳстересси — государствăн пысăк ěçě пулса тăрать. Çакă вăл партипе совет тата хуçалăх организацийěсенчен çав ěçе куллен контрольлесе, ертсе пыма ыйтать. Çěнě кадрсем вěрентсе хатěрлес ěçре производствăллă вěренěвěн мěнпур системипе усă курмалла, кунта кадровиксем çамрăк рабочисене шефа илни те, кěске вăхăтлăх курссем уçни те, стахановла шкулсем туни те т. ыт. те кěреççě. Вěсене валли йěркеллě йăла условисем туса памалла, вěсем хушшинче политикăллă воспитани ěçне анлăн сармалла. Çамрăк рабочисен нушисем çине бюрократла пăхнине пуçěпех пěтермелле.

Яланах асра тытма тивěçлě тепěр категори вăл — мастерсем пулса тăраççě. Юлашки вăхăтра мастерсем пулса ěçлеме стахановецсенчен нумай уйăрса лартнă. Вěсен теори тěлěшěнчен пěлӳсем çителěксěр, уйрăмах вěсен ертсе пырас ěç опычě сахал. Пирěн малта пыракан заводсенчи мастерсем социализмлă ăмăрту ыйтăвěсемпе, çамрăк рабочисене производствăна вěрентес ыйтусемпе лайăхрах ěçлеме тытăнчěç пулин те, çапах та пур çěрте те мар-ха вěсем хăйсен участокěсенче производствăн чăн-чăн организаторěсем пулса тăраççě. Пирěн мастерсем хушшинче вырăнти, националлě кадрсем сахал-ха. Пирěн предприятисенчи хуçалăх тата парти руководителěсем мастерсене политикăллă воспитани парас, вěсен производствăри ăсталăхне ӳстерес, мастера ěçěн стахановла меслечěсене пурнăçа кěртсе пыракан чăн-чăн новатор тăвас тěлěшпе çине тăрсах ěçлеме тивěçлě.

Ертсе пырас ěçе куçарнă юлташсене ěçпе политика тěлěшěнчен ӳстерессишěн кулленех тăрăшмалла. Çакă вăл — парти организацийěсен тӳрě тивěçлěхě.

Хěрлě Çара боеприпассемпе хěçпăшал, продовольстви кăна мар кирлě, çавăн пекех ăна лайăх вěрентсе хатěрленě боецсем тăтăшах парса тăмалла. Оборонăн Государственный Комитечě всевобуч çинчен постановлени йышăннăранпа хулара пиншер çынна кучухнехи çапăçусен тěп никěсне вěрентсе хатěрленě. Еççыннисенчен 25 пин çын ытла сывлăшран килсе тапăннинчен тата химиллě тапăнуран сыхланас ěçе вěренсе хатěрленнě. Çак ěçе пирěн малалла туса пымалла.

Всевобуч подразделенийěсем урлă, Осоавиахим тата РОКК организацийěсем урлă пирěн кашни ěççыннине пěр-пěр çар специальноçне вěрентсе кăлармалла. ПВХО правилисене халăха 100 проценчěпех вěрентсе çитермелле, самозащита группиcене пурне те яланах хатěр тытмалла. Пирěн пожарнăй командăсен ěçри ăсталăхне пур енěпе те ӳстерсе пымалла.

Хулари физкультура организацийěсем халăха вăрçă вăхăтěнче кирлě физически хăнăхусемпе пěлӳсем парас тěлěшпе чылай ěçсем тунă. Кроссене кăна физкультурниксемпе всевобуч боецěсем, призывниксемпе шкул ачисем 30 пин çын ытла хутшăннă. Анчах тата çакăн пек çитменлěх те пур: физкультура организацийěсем автомобиль, мотоциклет, велосипед спорчěсем енěпе ěçлемеççě, йěлтěрпе инçе çула каяс ěçе организацилемеççě. Çак çитменлěхсене тӳрлетмелле, халăх хушшинчи спорт ěçне анлăн туса пымалла. Вěренекенсене çар ěçне вěрентес ěç çине ытларах çавăрăнса пăхмалла, шкулсене çар кабинечěсем тума пулăшмалла, шкул ачисен занятийěсене йěркеллěн ирттерсе пыма пур условисене те туса памалла.

Парти организацийěсен тӳрě обязанноçě — фронтовик çемьисен тата вăрçă инвалидěсен пурнăçěпе йăла ыйтăвěсем енěпе ěçлесси пулса тăрать. Вăрçă пуçланнăранпа фронтовиксен çемьисене 2.370 пин тенкě ытла пособи тӳленě, 600 яхăн хваттер панă, 4 пин кубометр ытла вутă панă. Фронтовиксен ачисене пěр пин çынна яхăн ача сачěсемпе яслисене вырнаçтарнă. Отечественнăй вăрçă инвалидěсене ěçе вырнаçтарсах пыраççě. Тăван çěршыва паттăррăн хӳтěлекен çемьисемшěн малашне те çине тăрсах тăрăшмалла, вěсен нушисем çине сӳрěккěн пăхнине пуçěпех пěтермелле.

Отечественнăй аслă вăрçă агитаципе пропаганда ěçě умне çěнě задачăсем лартрě — мěнпур совет халăхне Совет государствин ылханлă тăшманне хирěç — Германи фашизне хирěç кěрешěве çěклемелле. Агитаципе пропаганда ěçěн тěп никěсне аслă Сталин вăрçă тапхăрěнче тухса каланă сăмахсене хунă. Политикăллă калаçусем, политинформацисем, митингсем, хаçат-журналсем вуласси — çаксем массăллă-политикăллă ěçре пысăк вырăн йышăнса, халăх хушшинче анлăн сарăлчěç. Отечественнăй вăрçă пуçланнăранпа лекцисемпе докладсем 2 пине яхăн туса ирттернě, вěсенче 208 пин çын ытла пулнă. Партин хула комитечěн лекторěсемсěр пуçне, партипе совет активěнчен докладчиксем пулма 125—130 юлташа явăçтарнă. Анчах халě лекцисен пахалăхне тивěçлě таран контрольлесе тăманнине те палăртмалла. Хăшпěр лекторсемпе докладчиксем кирлě пек хатěрленмесěрех халăх умне тухнă. Вăрçă вăхăтěнче коммунистсем тата актив хăйсен идейăллă-политикăллă виçине ӳстерес тěлěшпе ěçе вăйсăрлатрěç. Политикăллă пěлӳлěхе ӳстерес тěлěшпе хăйсем тěллěн ěçлекенсене пухса калаçусем, консультацисем ирттерме пăрахрěç, кружоксен ěçě чарăнса ларчě. Революциллě теорие вěренес ыйтусем парти организацийěсен кун йěркинчен тухса ӳкрěç. Хулари парти активěн сентябрьте пулса иртнě пухăвě коммунистсен культурăллă тата политикăллă таврак урăмне сарас ěç çине çавăн пек пăхнине хыттăн сивлерě. Пропаганда ěçě чěрěлнě пек туйăнчě. Калаçусем, консультацисем, «ВКП(б) историйěн кěске курсне», Сталин юлташăн выступленийěсене вěренекенсем валли лекцисем ирттерме тытăнчěç. Сталин юлташăн Октябрьти Социализмлă аслă революци 25 çул тултарни çинчен тунă докладне, унăн 1942 çулхи ноябрěн 7-мěшěнчи приказне вěренсе, вěсене ěççыннисене ăнлантарса парас тěлěшпе хулари парти организацийě пысăк ěçсем турě. Çав тапхăрта мěнпур агитациллě-пропагандăллă ěç çěнě ӳсěмпе çěкленчě. Çак ěçе вăйлатма парторганизацисен секретарěсемпе агитколлектив руководителěсене ятарласа пухса семинар туса ирттерни, Сталин юлташăн докладě тăрăх агитаторсем валли лекцисем туса ирттерни, Сталин юлташăн докладне вěренес тěлěшпе агитациллě-пропагандăллă ěçри опыта сарас майпа канашлусем туса ирттерни нумай пулăшрě.

Анчах партиллě пропаганда çинчен ВКП(б) Центральный Комитечě кăтартса панисене тата парти активě йышăннисене горком пěтěмěшпех пурнăçа кěртеймен-ха. Коммунистсен идейăллă-теориллě виçине ӳстерес тěлěшпе ěçлемелли нумай-ха.

Политикăллă агитаци ěçěнче пирěн халě пысăк çитменлěхсем пур. Эпир агитаципе халăхăн пур сийěсене те çавăрса илеймен. Калаçусемпе докладсем чăваш чěлхипе сахал туса ирттеретпěр. Агитаторсем ăнлантаруллă ěçе пěр-пěр коллектив умěнче тăракан конкретнăй задачăсемпе çителěксěр çыхăнтарса пыраççě. Çавăн пекех наглянăй агитацие тивěçлě вырăна лартман.

Çавăн пек ялалана вăрçă вăхăтěнче тӳсме май çук. Пирěн малашнехи агитациллě-пропагандăллă ěçěн ěмěчěпе тěллевě çакăнта пулса тăрать: Сталин юлташăн кăтартăвěсене пурнăçа кěртсе пырса, совет обществин идейăллă, политикăллă тата моральлě пěрлěхне малалла та пур енěпе те ӳстерсе çирěплетсе пымалла.

Партин мěнпур шалти ěçне те чи çӳллě пусăма çěклемелле. Парторганизацин ěçпе вěресе тăракан пурнăçě, уйрăмах вăрçă вăхăтěнчи условисенче, кашни коммуниста коллективăн вăйне ытларах туйса илме май парать, парти, тăван çěршыв умěнчи тивěçлěхе ăнланса илессине ӳстерет, коммуниста хăйěн мěнпур вăйěсене фронта пулăшнă çěре пама, нимěçсен фашистла захватчикěсене пěтерсе тăкнă çěре пама хавхалантарать.

Вăрçă вăхăтěнче партипе массăсем хушшинчи çыхăнусем татах та таччăнрах пěтěçсе çирěпленчěç, вěсем юнлă çапăçусен, вăхăтлăха пулнă ăнăçусăрлăхсен тата ытти нумай тěрлě йывăрлăхсен хаяр тěрěслевне тӳссе ирттерчěç. Партипе халăх хушшинчи пěрлěх ӳссе çирěпленнине кăтартакан тěслěхсем нумай, çав чи паха тěслěхсенчен пěри вăл— Ленин—Сталин партийěн речěсем ӳсни пулса тăрать.

Пирěн хулари парти организацийě мěнле ӳссе пынă-ха? Парти ретне хулара 1940 çулта 351 çынна, 1941 çулта—210 çынна, 1942 çулта—330 çынна илнě. Партие заводсенчи чи лайăх çынсем — орденоносецсем, стахановецсем, малта пыракан инженерсемпе техниксем, учительсемпе врачсем, наука работникěсемпе искусство работникěсем кěчěç. Нимěç оккупанчěсене çапса аркатнă çěре мěнпур вăя, кирлě пулсан пурнăçа та парас шухăш—партие кěрекенсен заявленийěсенче пуринче те тěп шухăш пулса тăрать.

Партие илес тěлěшпе хула комитечěн ěçěнче пулнă çитменлěхсене Обкомпа горкомăн пленумěсенче критикăланине ВКП(б) хула комитечěн бюровě шута илчě тата çав çитменлěхсене пěтерес тěлěшпе мерăсем йышăнчě. Халě ěнтě задача — парти речěсене, уйрăмах рабочисен, хěрарăмсемпе комсомолецсен йышěнчен, ӳстерес ěçе татах та лайăхрах организацилессинче, малта пыракан çынсене партие илес ыйтусемпе куллен ěçлесе пырассинче пулса тăрать.

Хулари парторганизацире кандидат стажě тулса иртнě ВКП(б) членěсен кандидачěсем сахал мар. Çакă вăл çамрăк коммунистсене воспитани парас тěлěшпе çителěксěр ěçленине пěлтерет. Пуçламěш парторганизацисем кашни уйрăм кандидатăн пахалăхне практикăллă ěçре тěрěслемеççě, партиллě поручениcем кандидатсен пултарулăхне шута илмесěр параççě, час-часах кандидатсен нимěнле поручени те çук. ВКП(б) членěсен кандидачěсене ӳстерессишěн, çамрăк коммунистсене политикăллă воспитани парса ӳстерессишěн парторганизаци секретарěсен те, ВКП(б) горкомěн те çине тăрса тăрăшмалла.

Парторганизацисен нумай секретарěсем фронта кайнă пирки парти ěçне çěнě, çамрăк кадрсем хутшăнчěç. Вěсене куллен пулăшса пыни кирлě. Хула комитечě çакна шута илчě. Тěрлě ыйтусемпе парторганизацисен секретарěсен канашлăвěсем тăтăшах пулса иртеççě. Парторганизацисен руководителěсене ВКП(б) горкомěн бюровěсенче итлеççě. 1942 çулта кăна партин шалти ěçěсен уйрăм ыйтăвěсем тăрăх бюрора парторганизацисен 34 секретарě отчет туса панă. Горкомăн пленумěсемпе партактивăн тăтăшах туса ирттерекен пухăвěсем пысăк шкул пулса тăчěç. Кунсăр пуçне, парторганизацисен секретарěсен темиçе семинарне туса ирттернě, иртнě çулхи ноябрь уйăхěнчен пуçласа вара тăтăшах ěçлекен семинар тунă.

Комсомол—партин чи çывăх помощникě тата боевой резервě. Парторганизацисен комсомол организацийěсене куллен ертсе пымалла, çамрăксенчен тăван çěршывшăн паттăррăн çапăçакан боецсем вěрентсе çитěнтермелле тата вěсенчен чи лайăххисене парти ретне активлăн суйласа илмелле. Хулари парторганизацин комсомола ертсе пырас ěçре чылай пысăк çитменлěхсем пур-ха. ВЛКСМ организацийěсен речěсем вăрахăн ӳсеççě. Комсомолăн хăшпěр организацийěсенче воспитани ěçне япăх йěркеленě. Комсомолăн шкулсенчи организацийěсен ěçěнче уйрăмах çитменлěхсем нумай. Çамрăк рабочисемпе союзра тăман çамрăксем хушшинче политикăллă воспитани ěçне çителěксěр туса пыраççě. Комсомола парти енчен ертсе пырассине пур майсемпе те лайăхлатмалла.

* * *

Вăрçă кашни парторганизацишěн, кашни уйрăм коммунистшăн пысăк экзамен пулса тăчě. Фронта халăхăн чи лайăх представителěсем, вăл шутра коммунистсем нумай кайрěç. Кадрсем çěнелчěç. Фронт фабрикăсемпе заводсем, колхозсем, транспорт умне пысăк требованисем лартать. Нимěçсен фашистла захватчикěсене хирěç пыракан кěрешěве коммунистсем мěнпур вăя параççě, тăван çěршыва вěсем геройла хӳтěлеççě, тылра та ывăнма пěлмесěр ěçлеççě.

Чăваш республикин столицинчи большевиксем хулари ěççыннисен мěнпур вăйěсене фронт заказěсене пурнăçа кěртнě çěре, хамăрăн тыла татах та ытларах çирěплетнě çěре мобилизацилес тěлěшпе пысăк ěçсем туса ирттерчěç тата халě те пысăк ěçсем туса пыраççě.

Партин нумаях пулмасть пулса иртнě хулари VIII-мěш конференцийě Чăваш республикин столицинчи большевиксем ВКП(б) Центральный Комитечěпе аслă Сталин тавра нихçанхи пек мар таччăн пěтěçсе тăнине кăтартса пачě.

Хěрлě Çарăн отечественнăй вăрçă фрончěсенчи чаплă çěнтерěвěсемпе тата Сталин юлташ Чăваш республикинчи ěççыннисене саламланипе, тав тунипе хавхаланса, Шупашкар хулинчи ěççыннисем тăшмана пуçěпех çапса аркатассишěн малашне те ывăнма пěлмесěр ěçлеме хатěр тăраççě.

Йăлтах — фронт валли, йăлтах тăшмана çěнтернě çěре!

Хěрлě Çар 25 çул тултарнине çěнě çитěнӳсемпе кěтсе илер!

Хулари VIII-мěш партконференцин решенийěсене пěтěмěшпех пурнăçа кěртер!

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарěн — 4—26, промышленность пайěн —3—99, ялхуçалăх пайěн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 061

Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2 Ф. 6. 58. 84 п